ПĔЛӲ — ПУРНĂÇ ÇУТИ

# Шăнкăрав

1№ (13) вырсарникун, кăрлач уйăхĕн (январĕн) 5-мĕшĕ, 2003 çул

## Çĕнĕ çул ячĕпе!

*Хисеплĕ вĕренекенсемпе вĕрентекенсем, «Шăнкăравăн» çывăх тусĕсем! Акă ĕнтĕ, сисмерĕмĕр те, 2002 çул та иртсе кайрĕ, черетлĕ чĕрĕк, вĕренӳ çулĕн çурри вĕçленчĕ. Çĕнĕ 2003 çул çитрĕ. Унпа пĕрле, паллах, кашнинех çĕнĕ ĕмĕтсем, çĕнĕ тĕллевсем çуралчĕç пулĕ. Эпир сире каникулта çĕнĕ чĕрĕк валли вăй пухма, лайăх канма сунатпăр. Çĕнĕ çулта ăнăçу яланах сирĕнпе пултăр. Кăçал та эсир «Сувар» хаçата çырăнса илессе, ăна тата унăн хушма кăларăмĕсене малашне те юратса вуласса шанатпăр.*

*Çĕнĕ 2003 çул ячĕпе сире, хаклă тусăмăрсем!*

***«Шăнкăрав» редакцийĕ.***



*Олимпиада-2002*

## Лайăх паллăсем илер!

«Тутарстан Республикинчи халăхсен чĕлхисем çинчен» саккун, Тутарстанпа Чăваш Ен вĕрентӳ министерствисем пĕрпĕрин хушшинче çыхăнса ĕçлесси çинчен йышăннă Килĕшӳ тăрăх чăваш чĕлхипе литературине вĕрентес ĕçа лăха лайăхлатас, тăван чĕлхен сумне ӳстерес, ăс-хакăл хăватне аталантарас, пултаруллă вĕренекенсене палăртса воспитани парас тĕллевсене пурнăçласа 2002 çулхи раштавăн 16-18-мĕшĕсенче чăваш чĕлхи тата литературипе республикăри пиллĕкмĕш олимпиада иртрĕ.

Республикăри чăваш шкулĕсенче вĕренекенсем хăйсен хушшинче чи пĕлӳллисене палăртма кăçал пиллĕкмĕш хут пухăнчĕç. Çак кунсенче чăваш олимпиадипе пĕрле мордва чĕлхипе литературине вĕренекенсен те олимпиади иртрĕ. Олимпиада пĕлтерĕшĕ, кирлĕлĕхĕ çинчен нумай калама пулать, унăн пĕтĕмлетĕвĕсем Тутарстанри чăваш ачисен пĕлĕвĕсем пĕчĕккĕн ӳссе пынине кăтартаççĕ. Çакă паха та.

Олимпиадăна irттересси шĕн яваплă ТР вĕрентӳ министерствин специалистне Надежда Зотиковна Несмеловăна çак пысăк ĕçе лайăх йĕркелесе пынишĕн тав сăмахĕ калас килет. Олимпиадăран ачасем тăван шкулĕсене савăнăçлă йăл кулăпа таврăннинче унăн тивĕçĕ пысăк. Вĕрентӳ министерствинче чăваш тата ытти вак халăхсен чĕлхисемпе ĕçлекен методист иртнĕ çулсенче еплерех кирлĕ пулнине паян эпир лайăх куратпăр.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)**

**Сăнӳкерчĕкре Е.Яковлева, М.Чалина, Н.Никитина.**

*Викторина пĕтĕмлетĕвĕсем*

## Çĕнтерӳçĕсене саламлатпăр

*«Шăнкăрав» хушма кăларăмра ирттернĕ «Шухăшлав» викторинăн пĕтĕмлетĕвĕсене пĕлтеретпĕр. Ачасен хуравĕсене хакласа конкурс комиссийĕ çак вырăнсене палăртрĕ.*

**I вырăн (фотоаппарат) — Дмитрий Верияլов, Пăва районĕ, Пӳркел;**

**II вырăн («Сувар» хаçата çулталăка çырăнтарни, «Шурăмпуç» журналăн 3-мĕш кăларăмĕ) — Владимир Игнатьев, Чистай районĕ, Анат Кăтрата;**

**III вырăн (фотоальбом тата аудиокассета) — Лидия тата Александр Ярушевсем, Аксу районĕ, Кивĕ Саврăш;**

**IV вырăн (видеокассета тата аудиокассета) — Дмитрий Сайкин, Пăва районĕ, Рункă.**

Викторина хуравĕсем

1. Юрий Кудаков.
2. Казанков, Никифоров, Бачков, Иванов, Башкиров.
3. Любовь Мартьянова. «Чăвашла» сăвăран.
4. 1857 çулхи сентябрьте «Князь Пожарский» пăрахутпа Шупашкар тĕлĕнчен иртсе пынă чух Тарас Григорьевич Шевченко хăйĕн дневникĕнче çырса хунă.
5. 1781çулта. Ку вырăнта кăвакалсем нумай пулнă.
6. Валентина Кузнецова.
7. Саламалик.
8. «Тĕлĕк».
9. Иваньково, Углич, Рыбинск, Чулхула, Саратов, Волгоград, Самара, Шупашкар.
10. Чĕкеç.

Викторина çĕнтерӳçисене ăшшăн саламлатпăр, вĕренӳре пысăк çитĕнӳсем тума ăнăçу сунатпăр.

**«Шăнкăрав» редакцийĕ.**

*Пултарулăх çăлкусĕ*

## Чăн чăваш хĕрĕ

Хусанти Атăлçи районĕн пуçлăхĕсем тĕрлĕ халăх туслă пурăнтăр тесе пысăк ĕçсем тăваççĕ. Районта «Приволжский район» хаçат час-часах ик-виç чĕлхепе тухать. Халĕ çамрăксемшĕн «Я — Приволжанин» хаçат та никĕсленĕ. Унăн тиражĕ шкулсене, ача-пăча сачĕсене саланать. Кунсăр пуçне районăн вĕрентӳ пайĕ те нацисем хушшинчи çыхăнусене аталантарма ырми-канми тăрăшать.

Уйрăмах çак кăткăс ĕçре ачасене хушма пĕлӳ паракан центрăн тӳпи пысăк. Шăп çак центрта вăй хурать çамрăк чăваш хĕрарăмĕ Елена Токшикова. Педагог пулнă май, вăл чăвашлăх туйăмне Хусанти кашни йăхташăмăр чунĕнче вăратасшăн, ытти халăх çыннисене чăваш культурипе, чĕлхипе паллаштарасшăн чунне пама хатĕр.



Хусанта 12 пин ытла чăваш, анчах та вĕсем пысăк хулара питĕ те сапаланса пурăнаççĕ, пĕр вырăна пухма çав тери йывăр. Çакă та хăратмасть Елена Александровнăна. Вăл тăрăшнипе центрта чăвашсен «Çăлкуç» вырсарни шкулне никĕслеççĕ. Кунпа та çырлахмасть çамрăк педагог: ача-пăча сачĕсенче шкулăн филиалĕсене уçать, тутар, вырăс, мăкшă ачисене чăваш чĕлхине, юрри-ташшине вĕрентет. Хăйĕн ĕçне халăха кăтартас тесе Елена Александровна кашни çул тенĕ пекех раштав уйăхĕнче Атăлçи районĕнче Чăваш культурин эрнине ирттерет.



Кăçал та çавăн пек эрне «Хурăнташ-2002» ятпа раштавăн 10-мĕшĕнче 363-мĕш садра уçăлчĕ, «Шăпчăк ятăм пахчана» программăпа иртрĕ. Чăваш культурин эрнине уçма Атăлçи район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Николай Павлович Пермяков, методика пайĕн ертӳçи Мария Трофимовна Федорова тата ытти пысăк хăнасем те пычĕç. Ачасем чăваш юррисене шăрантарчĕç, курма пухăннисене чăваш халăхĕн тумтирĕсем çинчен хывнă халапсене каласа пачĕç.

Раштавăн 13-мĕшĕнче Чăваш культурин эрни 114-мĕш шкулта малалла тăсăлчĕ. Программа кунта та пысăк ăнăçлăхпа иртрĕ. Раштавăн 16-мĕшĕнче эстафета 160-мĕш номерлĕ ясли-сада куçрĕ. Кунта ытларах фольклор тимлĕхре пулчĕ. Ача-пăчасем Чăваш Енĕн авалхи халапĕсене каласа пачĕç.

Сисмесĕрех эрне вĕçĕ те çитрĕ. Раштавăн 18-мĕшĕнче Атăлçи районĕн хушма пĕлӳ паракан центрне халăх йышлă пуçтарăнчĕ. Шупка çӳçлĕ ватăсем те, çамрăксем те, вĕт-шакăрсем те Чăваш культурин эрнине вĕçлекен пысăк концерта курса Елена Токшикова ĕçне хакларĕç.

Концерт пĕр шайрăксăр иртрĕ. Чăннипе те чунне парса тăрăшнă центр педагогĕ Елена Токшикова. Çăмăл мар вăл тутар, вырăс, ытти халăх ачисене пирĕн чĕлхене вĕрентсе чăвашла юрлаттарасси. Халăх педагогăн ĕçне пысăка хурса тăвăллăн алă çупрĕ.

— Эпир хамăр ĕçтешĕмĕр çине тăраслăхĕнчен, унăн пултарулăхĕнчен, палăртнине тем тесен вĕçне çитерме тăрăшнинчен, хăй халăхĕн культурине, чĕлхине, ачасене çав тери юратнинчен тĕлĕнетпĕр. Çавăнпах ăна вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшатпăр. Елена Александровна чăннипех те чăваш халăхĕн хĕрĕ, — тет центрăн наци пайĕсен пуçлăхĕ Зайтуна Гарифуллина.

Хăйĕн ĕçне çапла хакланăран Елена Александровнăн савăнăç куççулĕсем те тухрĕç. Чăнах та вăл чăваш культурине ытти халăх ачисем хушшинче сарса, паллаштарса хак пама çук пысăк ĕç тăвать. Çавăнпах ăна Тутарстанри ЧНКА канашĕн председателĕ, членĕсем, Атăлçи районĕн вĕрентӳ пайĕн ертӳçисем чун-чĕререн саламласа тĕрлĕ парнесем пачĕç. Эпир те, суварçăсем, Елена Александровнăна çĕнĕ çулта çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, йывăр та кăткăс ĕçре тата та пысăкрах тӳпене çĕнсе илме сунатпăр.

**Виталий ЕЛТОВ.**

**Автор сăнӳкерчĕкĕсенче: чăваш халăх тумĕ ачасене тата та илем кӳрет; Е.А.Токшикова.**